24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 НОЯБРЬ 28 ЭРНЕКУН 281 (5996) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАСОР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ.

Агротехникăна вĕренер

Отечественнăй аслă вăрçăн кунĕсенче Хĕрлĕ Çар ретне кайнă колхоз председателĕсем, уйăх тата трактор бригадисен бригадирĕсем, çавнашкалах ферма заведующийĕсем вырăнне çамрăк работниксем, уйрăмах хĕрарăмсем йышлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Çак çамрăк кадрсене хулленки ĕçре пулăшса вĕрентсе пыни кирлĕ.

Кăçал республикăри нумай колхозсем, бригадăсем тата звеносем, çавнашкалах фермăсем тырпул тухăçлăхĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕн планлă заданийĕсене иртерсе тултарчĕç. Колхозниксене ĕçшĕн хуçса тӳлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановлени агротехникăна вĕренсе ăна ĕçре сарлакан пурнăçа кĕртсе пыма хавхалантарчĕ.

Малта пыракан колхозсем кашни культурăн агротехникине пĕлсе ĕçе кĕртсе пычĕç. Çавна пула пирĕн республика кăçал тырпул тухăçлăхĕн планлă заданине иртерсе тултарчĕ. Калинински районри 58 колхозран 32 колхозра пур культурăсем тăрăх та тырпул тухăçлăхĕ планпа пăхнинчен ытларах пулнă. Районри 183 бригадăран 178 бригадăра тырпул тухăçлăхĕн планлă заданине иртерсе тултарнă. Тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстерӳ колхозсемпе бригадăсем тата звеносем Комсомольски районра та чылай.

Елчĕк районĕнчи «Вперед» колхозри А. Скворцова ялташ звени гектартан 110 центнер хăяр вырăнне 359 центнер, Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхозри И. Чупраков звени гектартан 4 центнер кантăр вăрри туса илес вырăнне 8 центнер, Кувакино районĕнчи «Ударник» колхозри А. Тюрина ялташ звени гектартан 74,4 центнер махорка туса илнĕ. Çавнашкал примерлăн темĕн чухлех илсе кăтартма пулать.

Вăрнар районĕнчи Сталин, Молотов ячĕпе тăракан тата Куславкка районĕнчи «Динамо», Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Кунта агротехникăна вĕренес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăсемпе колхозниксем иртнĕ-хĕлле агрономсем ертсе пынине стахановла шкулта тата агротехника кружокĕсенче вĕренчĕç. Вĕсем удобрени-семпе мĕнле майпа усă курмалли çинчен, тăпрана çемçетесси, сортлă вăрлăхсем тăвасси çинчен вĕреннĕ. Çак ĕçре колхозниксене колхозри хата-лаборатори те пысăк пулăшу панă.

Калас пулать, ялашки вăхăтра хăшпĕр колхозсенче хата-лабораторисем çине ситĕлĕхĕр çавăрăнса пăхма пуçларĕç. Тĕрĕссипе илсен, хата-лабораторисен агротехника вĕренĕвне пуçарса, ертсе пыракансем пулса тăмалла. Сталин ячĕпе тăракан колхозри хата-лабораторире иртнĕ çулта агротехникăна бригадирсемпе звеноводсем кăна мар, рядовой колхозниксем те йышлăн вĕреннĕ. Çавăнпа кунта рядовой колхозниксем хушшинче вăйлă тырпул мастарĕсем вуншарăн ӳссе çитĕнчĕç.

Иртнĕ çулта опытсем тăрăх кăçал та колхозсенче стахановла шкулсем тата агротехника кружокĕсем организацилемелле. Çав шкулсемпе кружоксене хĕрарăмсене ытларах явăçтарас пулать. Агрономсен, зоотехниксен, ветеринари врачĕсен, пĕр сăмахпа каласан, ялхуçалăх специалисчĕсен задачи—стахановла шкулсемпе агротехника кружокĕсене ертсе пырасси, çамрăк кадрсене тухăçлă тырпул туса илме вĕрентесси пулать. Занятисене иртнĕ ялхуçалăхĕнчи стахановецсене, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсене енлăн явăçтармалла. Малта пыракансен шăхăрăпычĕсене стахановла шкулсемпе агротехника кружокĕсен занятийĕсенче тĕплĕн вĕренмелле.

Колхозсенче стахановла шкулсем тата агротехника кружокĕсем организацилес ĕçе чи малтанах çĕрĕç организĕсен ертсе пымалла. Çавăн пекех вĕсен колхоз председателĕсен, бригадирсен, звеноводсен тата ферма заведующийсен план ĕçлекен курсĕ-семинарĕсене организацилемелле. Çав курс-семинарсенче лайăх ĕçлекен колхоз председателĕсен, бригадирсен, звеноводсен пахă пычĕсемпе паллаштармалла. Курс-семинарсен программинче колхоз строительстви тата агротехникăн пайăрĕсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Вĕренӳ ĕçне умра тăракан задачăсемпе, ситес çулхи çуракине хатĕрлемессипе таччăн çыхăнтарса пымалла.

Пирĕн пысăк майсем тата условисем тур. Хĕл вăхăтĕнче кашни колхозрах агротехникăна тăрăшса вĕреммелле, çавăн вĕренĕвне практикăллă ĕçре анлăн усă курмалла. Çавăн чухне кăна эпир пирĕн аслă çулпуç Сталин ялташ ним-еç фашисчĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма мухтавлă Хĕрлĕ Çара, тăван çĕршыва тырпул тата аш-какай ытларах та ытларах парса тăмалла, тесе партăн задачăна ăнăçлăн татса парăпăр.

Колхозниксемпе колхозницăсем, агротехникăна çине тăрса вĕренĕр, çуракине хăтартуллăн хатĕрленĕр! Ситес çулта кăçалхинчен те вăйлăрах тырпул туса илер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Фронтăн Волоколамск тата Сталиногорск участокĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пынă.

Çĕнĕрен илнĕ даннăйсем тăрăх, ноябрĕн 23-мĕшĕнче ним-ĕçсенне, малтан пĕлтернĕ пек, 19 самолет мар, 55 самолет пĕтерсе тăкнă.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсен 33 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен икĕ самолетне персе антарнă.

* * *

Пирĕн авиаци ноябрĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсенне 107 танк, войскăсем ларса пыракан 400 автомашинăна çити, 30 полевой оруди, снарядсем тиенĕ 200 лава ытла, зенитнăй пулеметсен 25 точкине, 50 мотоцикл ытла пĕтерсе тăкнă тата тăпманăн пехотине 4 батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокенчен пĕринче Люлишенко ялташăн боецĕсем ноябрĕн 24-мĕшĕнче нимĕçсен 240-мĕш пехотнăй полкне çапса çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра Ермаков ялташăн часĕсем ноябрĕн 24-мĕшĕнче 25-мĕшĕнче нимĕçсен 49 танкне пĕтерсе тăкнă тата противник пехотин пилĕк батальонне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокенчен пĕринче кĕрешекен Бренин ялташăн часĕ В. ялĕнчи пынă пĕр çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтĕм çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем тăпманăнне 26 станковăй тата ручной пулемет, 3 миномет, радиостанци, вуншар пин патрон тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Драгвин ялташăн боецĕсем Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участокенчен пĕринче ялашки кунсенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участокенчен пĕринче Галкин ялташăн часĕ тăпманăн 20 ДЗОТ-не аркатса тăкнă, нимĕçсен 250 салтакне тата 50 офицерне вĕлернĕ, автоматла хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Киевщинăри партизансен отрячĕсем нимĕç захватчикĕсене сиссĕнмеллех пырачыра çапаççĕ. П. ялташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ хăй кĕрешекен районра пур кĕперсене те взрыв туса сирпĕтсе янă. Кирлĕрех пунктсенче нимĕçсем çĕмĕрĕк кĕперсене темиçе хут та юсаса лартнă, анчах партизансем вĕсене каллех сирпĕнтерсе янă. Нумаях та пулмасть партизансем противникăн автоколонни çине тапăннă та 7 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, тăпманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 35 çынна вĕлернĕ, нумай боеприпассем тытса илнĕ. Фашистсем отряда йĕрлесе тупса ăна пĕтерсе тăкма хăтланнисем пурте ăнăçсăр пулнă. Партизансем нимĕçсене танатана астарса кĕнĕ те вĕсене пĕтерсе пынă. Партизансен отрядне хирĕç кĕрешме янă нимĕçсен карательнăй отрячĕсем виçĕ эрне хушшинче, вилнисемпе амбулансене шутласан, 100 çын ытла сухатнă. Отряда вырăнти халăх хушшинчи çĕршер разведчиксемпе помощниксем пулăшаççĕ. Вĕсем фашистсен войскисем кӳрсе çӳрени çинчен отряд штабне пĕлтереççĕ, нимĕç салтакĕсен пĕчĕк ушкăнĕсене тытса пĕтерсе тăхма пулăшаççĕ. Хăраса ӳкнĕ фашистсем подкреплени яма ыйтнă, çав подкрепленисем киличчен халĕ çак районри ялсенчи нимĕç комендатурисене хупса лартнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен Харитонов ялташăн часĕсем противника халăх пурăнакан нумай вырăнсенчен хĕссе кăларнă. Фашистла войскăсенчен ирĕке кăларнă. Гребцово ялĕнчи çынсем çапла каласа парасçĕ: «Яла пырса кĕрсен, нимĕçсем килçуртсене хăйсем йышăннă, хресченсене вара, вăл шутрах стариксемпе ачасене те, урама хăваласа кăларнă. Хресченсене хăйсемпе пĕрле тӳшек-минтер таврашнĕ тата ытти кирлĕ япаласене те илме чарнă. Фашистсем йывăр çын пулнă Александра Бересникована, ача тăвас вăхăт çывхарса килнĕ пулин те, урама кăларса ывăтнă. Пелагея Погорелова колхозницăне нимĕçсем пĕтĕм хваттерне çаратнă, тумтирсене тата ытти хаклă япаласене илсе тухса кайнă, хăйне вара вилес патне çитиех хĕнесе пĕтернĕ. Тухса кайнă чухне фашистсем пӳрте граната ывăтса хăварнă. Варвара Колияшинăне, Анна Колияшинăне, Прасковья Питюнинăне, П. И. Кисленконе тата ытти колхозницăсене нимĕçсем мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе, килти кайăк-кĕшĕке пусса çинĕ, тырпула тата çĕрулмине турттса илнĕ. Фашистсем питех те нумай çынсене арестлесе паллă мар еннелле илсе тухса кайнă.

* * *

Чита облаçĕнчи ĕççыннисем Сталин ялташ фронта пулăшас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тĕнче калани çине ĕç тухăçлăхне çĕнĕрен ӳстернине ответлеççĕ. Сталинла вахтăна тăрса ылтăн шыракан Казаковски приискри бурильщиксем Михаил Буяновпа Карп Акулов пĕр сменăра 76 тонна руда кăларнă, нормăна 440 процент тултарнă. «Востуголь» трестĕн кăмрăк шахтисенче хĕрарăмсем фронта кайнă шахтерсем вырăнне ĕçлеме тăнă. Работницăсем Калмыковăпа Кропачова ялташсем малтан навалоотбойщиксен профессине вĕренсе алла илнĕ, кайран ывăр врубовой машинăсен машинистчĕсем пулса ĕçлеме тытăннă. Оленски тăхлан рудникĕ, «Востуголь» трестĕн «Новый Торм» шахти, «Амурзолото» трестĕ тата ытти предприятисем те çулталăк планне срокчен тултарнă. Забайкальери геологсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра вĕсем вольфрам, молибден тата ытти хаклă металлсем кăларнă. Темиçе вырăна туса эксплоатацине панă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Пĕтĕмĕшлĕ машиностроени Халăх Комиссариатĕнчен минометнăй вооружени Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен

Пĕтĕмĕшлĕ машиностроени Халăх Комиссариатĕнчен минометнăй вооружени Халăх Комиссариачĕ тăвас.

Минометнăй вооружени Халăх Комиссарĕ пулма Паршин Петр Иванович ялташа уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 26-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Граждански Сывлăш Флочĕн летнăй составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, Ленин орденĕ тата «Золотая звезда» медалĕ парса, çаксене Совет Союз Геройĕн званине парас:

1. Груздин Александр Ивановича.
2. Кашуба Павел Тарасовича

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 26-мĕш.

А. П. Белобородова генерал-майор званине парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Афанасий Павлентьевич Белобородова ялташа генерал-майорăн званине парас.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль.
1941 çулти ноябрĕн 26-мĕш.

ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРИАТĔНЧЕ

Кавалерин иккĕмĕшпе виççĕмĕш корпусĕсен ячĕсене тата 78-мĕш стрелковăй дивизин ятне утăштарса гвардейски чаççен ятне парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре кавалерин 2-мĕшпе 3-мĕш корпусĕсен тата 78-мĕш стрелковăй дивизин личнăй составĕ хăюлăхпа паттăрлăх, çирĕплĕх тата геройлăх кăтартнăшăн Верховнăй Командованин ставки çак асăннă чаççен ячĕсене улăштарса çакăн пек гвардейски чаççен ятне панă:

а) кавалерин 2-мĕш корпусне—кавалерин пĕрремĕш гвардейски корпусĕ. Корпус командирĕ генерал-майор Белов Павел Алексеевич;

б) кавалерин пиллĕкмĕш дивизине—кавалерин пĕрремĕш гвардейски дивизийĕ. Дивизи командирĕ генерал-майор Баранов Виктор Кириллович;

в) кавалерин тăххăрмĕш дивизине—кавалерин иккĕмĕш гвардейски дивизийĕ. Дивизи командирĕ полковник Осликовский Николай Сергеевич;

г) кавалерин виççĕмĕш корпусне—кавалерин иккĕмĕш гвардейски корпусĕ. Корпус командирĕ генерал-майор Доватор Лев Михайлович;

д) кавалерин 50-мĕш дивизине—кавалерин виççĕмĕш гвардейски дивизийĕ. Дивизи командирĕ генерал-майор Плиев Исса Александрович;

е) кавалерин 53-мĕш дивизине—кавалерин тăваттăмĕш гвардейски дивизийĕ. Дивизи командирĕ комбриг Мельник Кондрат Семенович;

ж) 78-мĕш стрелковăй дивизине—тăххăрмĕш гвардейски стрелковăй дивизи. Дивизи командирĕ генерал-майор Белобородов Афанасий Павлентьевич.

Асăннă дивизисемпе корпуссене гвардейски ялавĕсене парасçĕ.

Граждански Сывлăш Флочĕн пилочĕсене, бортмеханикĕсене тата инженерĕсене СССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕ Гражданский Сывлăш Флочĕн пилочĕсемпе бортмеханикĕсен тата инженерсен группине СССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлать.

Хĕрлĕ ялав орденĕпе 36 çынна,
Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе 72 çынна,
«За отвагу» медальпе 36 çынна,
«За боевые заслуги» медальпе 11 çынна награднăлать. (ТАСС).

ТĂВАН ÇĔРШЫВ ОБОРОНИН ФОНДНЕ

ЧКАЛОВСКОЕ (Хамăр корр.). Районри колхозсем оборона фондне вĕçĕмрен укçа-тенкĕ, заем облигацийĕсем хывса, тырпул, аш-какай, сĕт-çу парса тăраççĕ. Çĕршыв обороний фондне ӳстересси Сталин ялташ дскладне колхозниксем хушшинче ăнлантарса панă хыççăн татах вăйланчĕ. Кзыл-Чишмари «Маяк» колхоз оборона фондне 32 центнер тĕштырă, 3 пин литр сĕт, 1 тонна аш-какай панă. Колхозниксем государство заемĕсен облигацийĕсене 40 пин тенкĕлĕх оборона фондне хывнă. Вăл шутран колхоз председателĕ Минаев ялташ 150 тенкĕлĕх, бригадир Латыпов ялташ 100 тенкĕлĕх, колхозник Сыраев ялташ 1200 тенкĕлĕх панă. «Çĕршыв обороннине тĕреклетме куллен пулăшса тăрар», теççĕ «Маяк» колхоз членĕсем.

Вĕсен ырă тĕслĕхĕ ытти колхозсене те саралнă. Чепкасри «Кзыл Тан» колхоз оборона фондне 12 центнер тĕштырă, 1,2 центнер аш-какай, 15 килограмм çу, 50 килограмм çăм панă, 3.465 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Çавăн пекех «РОКК» колхоз 39 центнер, «Кзыл Юлдус» колхоз 28,63 центнер, «Первомайск» колхоз 12,79 центнер, «Канаш» колхоз 9,37 центнер тырă, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 3,43 центнер çĕрулми панă.

* * *

Ишлей районĕнчи колхозсемпе предприятисем, рабочисем, служащисем тата колхозниксем оборона фондне ӳстерес ĕçе анлăн хутшăнчĕç. Оборона фондне пĕтĕмпе 50.146 тенкĕ укçа, 54.370 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнĕç. «Красная Нива», «Чăваш Коммуни», «1-ое мая» тата В. И. Ленин ячĕпе тăракан колхозсем 22 центнер тырă, «Броневик», «Большевик», «Красное знамя», «Авангард» колхозсем 875 литр сĕт, «Самолет», «Агроном», «Тимĕр Сырми» колхозсем 68,9 килограмм çăм парса пулăшрĕç. Марка, Чантăр, Катраç, Тăван тата Сĕктер ялсовечĕсенчи ĕççынсем оборона фондне укçа-тенкĕ тата тырпул хывăççĕ.

Ярапайкасси ялсоветне кĕрекан колхозсемпе колхозниксем çак ĕçе малалла та анлăн сарса пыма тăрăшаççĕ. Çак кунсенче ялсовечĕпе 238 тенкĕ укçа, 315 штук çăмарта, 5 килограмм пыл, 5 сурăх, 1 кăвакал, 2 хур, 108 чăх, 235 килограмм тулă çăнăхĕ, 300 килограмм туртакан пĕр вăкăр, 81 килограмм аш-какай, 28 килограмм çу пама пулчĕç.

Анчах та оборона фондне тăвас ĕç çине Кăшавăшри, Ишекри, Шуркассинчи, Ыхракассинчи промартельсем сиелтен пăхаççĕ. Энтимĕркасси, Хăйматакасси, Ишек, Шуркасси, Янăш, Мамăш ялсовечĕсем оборона фончĕ тăвас тĕлĕшпе çитĕкĕр ĕçлеççĕ. Ку ялсовечĕсенче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Çак асăннă промартельсемпе ялсовечĕсен вăрçă вăхăтĕнги эпизтăха туйса илме вăхăт çитĕ.

Колхозниксем çулпуç чĕнсе каланине ĕçпе ответлеççĕ

КАЛИНИНО. Сталин ялташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмаха Калинин районĕнчи пур колхозсенче те ăнлантарса панă. Колхозниксем аслă çулпуç кăтартăвĕсене кăмăлласа пурнăçлама тытăнчĕç. «Комсомолец», «Смычка», «Правда» тата ытти нумай колхозсем декабрĕн 1-мĕш тĕлне тырпулсене çапса пуçтарса кĕрессишĕн ĕçлеççĕ. Кумбала ялĕнчи «Çĕнĕ çул» колхозĕ государствăна тырă, сĕт-çу, аш-какай парса татрĕ. «Смычка» колхозĕ çак кунсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 45 тир, 10 мăшăр çăматă тутарттарчĕ тата ăшă тумтирсем илме 500 тенкĕ укçа панă. Г. СКВОРЦОВ.

Пĕр шухăш-кăмăлпа ĕçлеççĕ

ШУПАШКАР. Çак кунсенче Чебторгри коммунистсемпе комсомолецсем пуху туса иртеççĕ. Пухура Сталин ялташăн доклачĕ сутуилӳ организацийĕсем умне лартнă задачăсем çинчен Куличев ялташ доклад туса панă. Доклада итлеме хыççăн пухури коммунистсемпе комсомолецсем таварсăвăнăш планне декабрĕн 12-мĕш тĕлне, çулталăк планне декабрĕн 24-мĕш тĕлне пурнăçа кĕртме обязательство илчĕç. Çавăн пекех пуху Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каланине те сӳтсе-явăрçç. Пухури çынсем çав пуçарăва пурте пĕр кăмăллă пулса ырларĕç. Нумайĕшĕсем бронепоезд валли çавăнтах укçа панă. 20 çынран пурĕ 500 тенкĕ пухăнчĕ. Коллектив бронепоезд валли укçа-тенкĕ малалла пухса пырать.

Çавăн пекех, Чебторг коллективĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем туса панисĕр пуçне, аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕмсем, простынясем тата минтер пичĕсем илме 30 тенкĕ укçа пырса панă. Çавăн пекех сутуилӳ пайăн начальникĕ Нагимов ялташ та 100 тенкĕ укçа панă. Ытти ялташсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсене мĕнпе те пулин пулăшу пама тăрăшаççĕ. М. ЧУПРАКОВА.

Колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем вăйлансах пыраççĕ

Оборонăн Государственный Комитечĕн председателĕ И. В. Сталин ялташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă ятпа Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче тухса каланă сăмаха районри ĕççыннисем радио тăрăх пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Ун хыççăн районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Митингсемпе пухусенче ĕççыннисем, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, тăмшăна хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăпас, тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе тата та лайăхрах ĕçлеме хăйсем çине обязательстăвăсем илчĕç.

Районри ĕççыннисем, Сталин ялташăн сăмахĕсемпе хавхаланса, ĕç тухăçлăхне кунран-кун ӳстерсе пыраççĕ. Çаканпа пĕрлех государство умĕнчи обязательствăсене тултарас, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçсем те палăрмаллах вăйлаяççĕ. Çак ялашки кунсенче кăна районри колхозсем государствăна 355 центнер тĕштырă, 370 центнер çĕрулми, 99 центнер аш-какай, 1.933 литр сĕт панăç. «Ĕмĕт» колхоз 27 центнер, «Серп» колхоз 21 центнер тĕштырă; «Коминтерн» колхоз 50 центнер, «Пучах» колхоз 20 центнер, «Глиссер» колхоз 16 центнер, «Самолет» колхоз 10 центнер çĕрулми панă. Сталин ялташăн историллĕ докладĕпе сăмахне анлăн сӳтсе-явăн хыççăн 36 колхозра государствăна аш-какай, 34 колхозра çĕрулми, 38 колхозра çăм парса татнă.

Çапах та пирĕн районри предприятисемпе колхозсем пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетнĕ тесе калама çук-ха. Кая юлса пыракан предприятисемпе колхозсем те пур. Гайпищекомбинатпа «Перламутр» фабрики хăйсен программисене йĕркеллĕ тултарса пыраймаççĕ.

Ялхуçалăх çулне вăхăтра вĕçлеме пирĕн районра условисем çитĕкленĕ. Çапах та хăшпĕр колхозсем кĕлте кӳртсе, аван çапса пĕтермен. «Сталинцы», «Авангард», «Броневик», «Канаш» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем уйхиртен кĕлте кӳртсе пĕтермен.

Сталин ялташ доклачĕпе хавхаланнă колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем декабрĕн 10-мĕш тĕлне аван çапса пĕтереççишĕн, çавăн пекех государство умĕнчи обязательствăсене тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Н. ГРИГОРЬЕВ.
ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Волоколамск енче

ВОЛОКОЛАМСК ЕНЕ, ноябрĕн 26-мĕш. Нимĕçсем Мускав çине «генерельнăй наступленипе» тунин вуннăмĕш кунĕ пĕтнĕ тĕле нимĕçсен тактики чылай улшăннă, тесе вывод тума юрать. Çак ĕçре пирĕнпек вăйлăн хирĕç тăни питех те пысăк вырăн йышăнать. Хĕрлĕ Çарăн оборонăра тăракан чăсĕсем вăйлăн пыра-пыра çапнине тÿссе, нимĕçсем сыхланулăрах пулма тăрăшаçĕ, танксен пысăк отрячĕсене çапăçăва кĕртме сыхланарах тăраççĕ. Тăшман танкĕсем килсе тухни боецсене шиклентерсе ÿкермест. Вĕсем тăшман танкĕсене чарса лартма, çунтарса яма, гранатăсемпе ывăтса çĕмĕрме вĕрентсе çитнĕ. Шикĕсĕр истребительсем хушшинче «танка хирĕç пĕччен» текен лозунг саралнă. Малтанхи корреспонденцисенче эпир нимĕç танкĕсене пĕччен-пĕрĕн çĕмĕрсе тăкнă красноармеецсемпе командирсем çинчен пĕлтернĕччĕ. Халĕ тăшман сыхланулăрах тăракан пулчĕ.

Можайск енчи çапăçусенче нимĕçсем наступленипе тăвакан пехотăна 15—20 танклă пысăк мар отрядсемпе пулăшса пыраççĕ. Тепĕр участокра, И. хули патĕнчи çапăçусенче те çавăн пекех пулса пырать. Çав хула ниĕ енчĕн тĕ пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Вăл Мускав патне илсе пыракан çул çинче. Çав хуларан темиçе шоссе тата грунтовой çулсем тухаççĕ. Кунта тата чугунçул та иртсе каять. Пĕр сăмахпа каласан, нимĕçсем çак хулана питех те тытса илеспĕн. Вĕсем хула патне айкинчен тапăнса пыма хăтланса пăхнă. Анчах пирĕн чăсем вĕсене çавăн пек хăтланнинчен нимĕн те тухманнине тавçăрса илтернĕ. Çула пÿлсе лартнă. Хула çывăхĕнчи ялсенчен пĕрине нимĕçсем хăйсен «Рейх» дивизийĕн полкне илсе пырса тăратнă, ăна танксем панă. Çĕрле пирĕн артиллери ял çине вăйлăн пырса тапăннă.

Икĕ кун иртнĕ. Çав участокра нимĕçсем хăйсен активлăхне питех кăтартмаççĕ. Вĕсем тÿрех пыра-пыра тапăнма чарăннă. Вĕсем хулана кăнтăр енчен çавăрса илме хăтланаççĕ. Пирĕн чăсем çак манерăпа та сире-сире пăрахаççĕ. Пирĕн хулана хÿтĕлекен чăсенче пулма тÿрĕ килчĕ. Кунта совет танкĕсемпе пĕрле Англи производствинче туса кăларнă танксен пысăк мар подразделенийĕ кĕрешет. Вĕсене эпир нимĕçсен танкĕсене хирĕç çапăçăва тухма хатĕрленсе тăнă позицире тĕл пултăмăр. Отряд командирĕ старший лейтенант Волошин вĕсем-пирки: «Çирĕп броня, лайăх хĕçпăшал. Пĕчиккĕ те, анчах хаяр тунă, унăн снарячĕ нимĕçсен йывăр танкĕсене те пăтăрать. Танка пытса пымалли аппарат лайăх итлет, унăн агрегачĕсен регулировки йывăр мар», терĕ. Каярахпа эпир Англи производстви туса кăларнă танксем çапăçура пулнине куртăмăр. Нимĕçсем Н. хулан кăнтăр енчи пункчĕсенчен пĕринче наступленипи тунă. Атака тума вăрман патĕнче пехотăн икĕ роти тата минометчиксемпе пухăнса тăнă. Çав вăхăтра ял патне пирĕн пехотăн пысăк мар подразделенийĕ тата Вербенев лейтенантăн çăмăл танксĕн взводĕ çыхăрса пычĕ. Танксем хатĕрленчĕç те çапăçăва кĕрсе кайрĕç. Вĕсем тăшман çине çилтăвăлла ывтăнчĕç. Нимĕçсем вĕсене отпор пама хатĕрленсе тă ĕлкĕреймерĕç. Салтаксемпе минометчиксем тарма тытăнчĕç. Наступленипи тума хатĕрлесе тăратнă нимĕçсен икĕ роти каялла çавăрăнчĕ. Вĕсене танксем хуса çитрĕç. Çавăнта кĕçĕн лейтенант Жуков танкпа пынă чухне пулеметран 40 салтака персе пăрахнă. Нимĕçсем ширĕн çине тапăнмалли тĕп никĕс пулса тăракан тепĕр ял еннелле хăварттăн тарчĕç. Пирĕн танксем çав яла та кĕрсе кайрĕç. Танксен атаки питĕ хăвăрт пулса пынă, пехота подразделенийĕ ун хыççăн ĕлкĕрсе те пырайман. Ахаль пулсан, Вербенев подполковникăн боецĕсем çав яла та хăйсен аллине çавăрса илнĕ пулĕччĕç. Вербеневăн танк взвочĕ часах çав яла иккĕмĕш хут атакăланă. Çав вăхăтра нимĕçсем танксене хирĕç пемелли тупăсем илсе пынă, хăйсен положенине лайăхлатас тесе пур мерăсем те йышăннă. Пирĕн танкистсем йывăр условисенче кĕрешнĕ. Вĕсем тăшман вăйлăн персе тăнă çĕре лекнĕ. Тăшман снарячĕ кĕçĕн лейтенант Жуков танкне шăтарнă. Жуков хăй аманнă. Вăл исходнăй позицине куçма приказ иличченех çапăçура пулнă. Вăл нимĕçсен виçĕ снарячĕ Вергалов лейтенантăн танкне сиенленнине курнă. Жуков хăй аманни çинчен манса ăна пулăшма кайнă, тăшман тупăсенчен персе тăнине пăхмасăрах вăл сиенленнĕ машинăна çапăçуран илсе тухнă. Танксем хăйсен ĕçне тунă, çав участокра нимĕçсен атаки арканса кайнă.

Танкистсене хисеплеççĕ. Пехота çапăçура хăйне юнашар танксем пынине юратать. Вĕсем хăйсен хăюлăхĕпе ытисене те хавхалантараççĕ. Старшинана походнăй кухня шанса панă. Акă кухня танкистсен командирĕн пункчĕ патне çитет. Вăл хăйĕн пистолетне кобурана чиксе командир патне чупать. «Кухня çапăçу хирне çитни çинчен пĕлтерме ирĕк парăр», тет вăл. Кухньăн çапăçура пулмалла мар. Анчах ун çине çул çинче минометсенчен пеме пуçланă. Старшина çав çапăçура танкистсен чăн-чăн юлташĕ пулса тăнине кăтартса панă. Унăн кухни çыла каялла кайман. Кухня вăрман çывăхĕнче вырнаçнă. Старшина боецсем валли хатĕрленĕ яшкана сыхланă. Вăл экипажсене пурне те тăрантарнă. Халĕ ун çинчен:

«Хамăр çын, унăн материальнăй чăсĕ — кухня пулсан та, вăл чăн-чăн танкист», тесе калаçаççĕ.

Каç пулас умĕн нимĕçсем хуларан кунçех мар пĕр вырăнта малалла кĕрсе кайни çинчен штаба пĕлтернĕ. Пĕр вырăнта нимĕçсем, ăна танк пулăшса пынипе, наступленине кĕнĕ, Пирĕнсем çапăçăва хатĕрленнĕ. Батальон командирĕ майор Мороз хăйĕн ротинчен пĕрине хăрушлăхра тăракан участока куçма приказ панă. Вăл карттăна планшет ăшне хурса: «Штабăн пуçтарăнса, рота хыççăн малалла каймалла. Пухăнса çитме 5 минута паратăп»,—тенĕ. Ку расра танкистсем пехотăна та артиллерие те ырланă. Анчах майор Морозов тата унăн тусĕсем хăйсем ĕмĕтленнине кĕтсе илеймен: ĕçе кунта танксемсĕрех тытнă. Пĕр енче нимĕçсене пирĕн пехота чарса тăнă, тепĕр енче, тăшманăн 10 танкĕ талтăнса пынă çĕрте, пирĕн артиллеристсем ĕçленĕ. Çапла вĕскен те хăвăрттăн пырса çапнă та — тăшманăн танкĕсем пирки урăх каласу та пулман.

Н. хула патĕнчи çапăçу кунĕ çакăн пек вĕçленнĕ.

Е. КРИГЕР.

(«Известия» хаçатран).

Хĕрлĕ Çар войскисен кăнтăр енчи контрнаступленийĕ

КАНТАР ЕНЕ, ноябрĕн 26-мĕш. Темиçе кун каярах Дон çинчи Ростов хулинчен хĕвеланăçнерех Хĕрлĕ Çар чăсĕ. сем противникăн наступленине аркатса тăкса, оборонăран контрнаступление куçнă. Çак наступление малтанах йĕркеллĕн хатĕрленнĕ. Артиллерирен персе тăнă тата авиаци вăйлăн пырса тапăннă хыççăн, Лопатин юлташ командир пулса ертсе пыракан ударнăй группа наступлени тума тытăннă. Фронтăн çав участокĕнче противник укрепленисем тунă пулнă. Пирĕн чăсем тăшман флангне тата тылне кĕрсе, çав укрепленисен хушшипе малалла куçма тăрăшнă. Нимĕçсен оборонине татса кĕме пуçласан, Халум юлташ командир пулса ертсе пыракан хĕрлĕ кавалеристсем малалла ыткăннă. Малти линисене хăвăрт йышăннă, анчах 10 километр малалла кайнă хыççăн пирĕн чăсем противник чылай вăйлăн хирĕç тăнине тĕл пулнă. Нимĕçсем, пирĕн боецсен атакинчен хÿтĕленес шутпа, çине тăрсах персе тăнă. Вĕсен çине каллех артиллерипе пеме лекнĕ. Хĕрлĕ Çарăн вут-çулăмĕ вăйлăрах пулнă, нимĕçсем каялла чакнă. Противник хăйне çакăн пек пырса çапасса кĕтмен. Хăшпĕр пунктсем темиçе хутчен те алăран алла куçнă. Чылай чухне пирĕн боецсем штыкпа тăрса çапăçăва кĕнĕ. Вĕсем тăшман йăвисем патне васканă. Нимĕçсем каялла çавăрăнса, чакма пуçланă. Çапăçусем пынă вăхăтра противник 30 километр каялла чакнă. Уйăрăм участокенче пирĕн боецсем нимĕçсене хĕссе 100 километр ытла каялла чакарнă. Противникăн çухатăвĕсем питех те пысăк. Клейстăн бронетанковăй группинне кĕрекен нимĕçсен 16-мĕш танковăй дивизине, хăйне никам çĕнтерейменнипе мухтанаканскере, çав çапăçусенче йăлтах тенĕ пек çĕмĕрсе тăкнă. Кунсăр пуçне, СС «Викинг» дивизине тата хăй вăхăтĕнче Крымра çапăçма палăртнă 49-мĕш горно-стрелковăй корпуса çĕмĕрсе тăкнă. Çар хатĕрĕсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Сăмахран, çав çапăçусенче уйăрăмах палăрнă Шепетов командирăн чăсĕ ноябрĕн 22-мĕшĕнче кăна тăшманăнне 22 тупă, 8 гаубица, 9 танк (вĕсенчен виçĕ йывăр танк) тата танксене хирĕç пемелли темиçе оруди тытса илнĕ.

Василенко юлташăн чăсĕнчи боецсен тата командирсен уйăрăмах пысăк йывăрлăхсене çĕнсе илмелле пулнă. Вĕсем темиçе кун тата темиçе çĕр хушши вăйлă укрепленисем тунă питех те кирлĕ. Г. пунктăн çапăçнă. Çав пункт патне пыма боецсен юханшыв урлă каçмалла пулнă, ноябрĕн 23-мĕшĕнче тин вĕсем Г. пункта çавăрса илнĕ. Ана штыкпа тăрса çапăçса йышăннă. Çав операцинче Василенко чăсĕ чăннипех те чаплăн кĕрешнĕ. Çак часть çирĕп те хăюллă пулнипе палăрса тăрать. Нумаях пулмасть ăна фронтăн çар совечĕ кăтартуллă оборонăшăн тав тунă. Çак чăса хирĕç тăшман 100 танк ытла çапăçăва кĕртнĕ, анчах боецсем нимĕн те шикленсе тăман, хăйсен позицисене пăрахса хăварман, йăлтах урăхла, тăшмана питех те пысăк çухатусем тÿстернĕ, нимĕç танкĕсем малалла каяссине чарса лартнă.

Çĕр çинчи чăссемпе пĕрле кĕрешекен Вермишин командирăн летчикĕсем операцисене ăнăçлăн туса пыма пулăшаççĕ. Çанталăк питех те начар тăнине пăхмасăрах, сталинла соколсем кунсерен 4—5 хутчен сывлăша вĕçсе хăпаççĕ. Сывлăшпи тата çĕр çинчи çапăçусенче вĕсем нимĕçсен 50 танкне яхăн çĕмĕрсе тăкнă, противникăн мотомехпехотине чылаях пысăк çухату тÿстернĕ.

Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапнине туйса илнĕ хыççăн противник халĕ çапăçусем пынă çĕре çĕнĕ войскăсем илсе пырать. Хĕрлĕ Çар чăсĕсем çаплах малалла каяççĕ. Вăйлă çапăçусенче Кăнтăр фронтĕнчи боецсем тăшмана хĕсеççĕ, ăна малалла хăваласа пыраççĕ, çĕнĕрен пунктсене тăшман аллинчен турта-турта илеççĕ.

(«Известия» хаçатран).

Тăшман кашни утăмрах пысăк çухатусем тÿсет

КАЛИНИН ФРОНЧĔ. Ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Пирĕн оборонăн сылтăм енче юлашки кунсенче вăйлă çапăçусем пуçланса кайрĕç. Пирĕн чăссем тăшмана хирĕç наступлени туни ăнăçлăн пулса пырать. Совет пехотни çапнипе нимĕçсен дивизийĕсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Тăшман вырăнĕ-вырăнĕпе контратакăна куçса, питĕ хытă хирĕç тăрать, анчах хирĕç тăни ăнăçусăр пĕтет. Пехотăн Н-ски чăсĕ, Б. юханшывĕн хĕвеланăç сыранĕнче темиçе ял тытса илсе, малалла наступлени туса пырать. Хăюллăн атака тунипе пирĕн чăсем хĕссе пырса противника Б. пунктран хăваласа каларнă. Çапăçу уй-хирĕсенче нимĕçсен 600 виллине яхăн выртса юлнă, тăшман каялла чакнă чухне вĕсене пытарма ĕлкĕреймен.

Пирĕн пĕр подразделени О. ятлă ялшăн çапăçнă, çĕрте противникăнне танксене хирĕç пемелли пĕр тупă, пĕр йывăр оруди, грузовой автомобиль, хĕçпăшалсемпе снарядсем тиенĕ лавсем, гранатăсемпе минăсем тултарнă нумай ещĕксем, велосипедсем, винтовкăсем тата автоматсем тытса илнĕ.

Фронтăн тепĕр участокĕнче противник халăх пурăнакан Ш. ятлă пункта йышăннă, çав пункта пирĕн боецсен пĕчĕк отрячĕ сыхласа тăнă пулнă. Çапах та çав пунктăн çапăнă çĕрте тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ: унăн вилнисемпе аманнисем 80 çынна яхăн выртса юлнă. Пирĕн икĕ çын вилнĕ, виççĕн аманнă.

Унченхи кунсенчи пекех, пирĕн авиаци, противникăн войскисем пухăнса тăнă вырăнсем çине, унăн мотомех-колоннисем тата аэродромĕсем çине тапăнса, активлăн çапăçать. Оленев юлташăн чăсĕнчи летчиксем кăна ноябрĕн 13-мĕшĕнче пехотăна боеприпассем тиенĕ 25 автомашинăна, фашистсен 20 танкне çити, икĕ оруди, горючи тултарнă икĕ цистернăна тата нимĕçсен пехотинне 150 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Туллимар данлăйсем тăрах, пирĕн пикировка тăвакан бомбардировщиксем пырса тапăннипе О. текен вырăнта нимĕçсен аэродромĕнчи çичĕ самолета çапса çĕмĕрнĕ.

Англи пичечĕ Иден тата Майский тунă заявленисем çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Англири радио тата пичет Иден тата Майский вăрçă хыççăн Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлесси çинчен тунă заявленисене анлăн çутатса пырать. Нумай хаçатсем çак ыйту тăрăх умстатьясем пичетлесе кăлараççĕ. «Дейли геральд» хаçат çапла çырать: Иден заявленине Англири кашни рабочи ырлать, кашни рабочи çав заявление хĕçпăшал тĕлĕппе ĕлтăшсем пулса тăнăранпа икĕ правительство пĕр-пĕрне шанса тăрасси вăйланса пынине курать. «Çакă вăл икĕ çĕршывăн çар хăвачĕсене вăйлатма пулăшать»,—тесе çырать хаçат малалла. «Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: «Англипе Саксони халăхĕсем тата Совет Союзĕ хушшинче пĕрлĕхлĕ тĕллевсем пурринне пула, вăрçă хыççăн Европăна организацилес тĕлĕппе тăракан йывăр проблемăна ăнăçлăн татса парасса шанма пултаратпăр. Çакăн пек ĕнтĕ Англи халăхĕн шухăшĕ. Иден Англипе Россия хушшинче интерессем тĕлĕппе хирĕçÿсем пулмĕç, тесе пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлеме вĕсен пур майсем те сителе-клĕ, тесе каланипе Англи халăхĕ килĕшет. Çак вăрçă пĕтнĕ хыççăн пирĕн çыхăнусем тата та вăйлăрах пулĕç, халиччен пулнă нумай хирĕçÿсем аванлăха тăрса юлĕç». «Дейли геральд» хаçат хăйĕн умстатьинче пĕр-пĕрне пулăшса туслăн ĕçлемелле тенипе демократиллĕ кашни халăх килĕшет, тесе çырать. «Паллах, тесе çырать хаçат, пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлесси, иртнĕ вăхăтпа танлаштарсан, татах та çирĕптрех никĕс çинче пулса пырĕ, çакă вара мирлĕхе сыхламалли май пулса тăрĕ».

Майский, Гэрманне континентра çĕнтермелле, тесе тунă заявлени çинчен сăмах хускатса, «Ивнинг стандарт» хаçат хăйĕн умстатьинче, çав фактран иртсе кайма май çук, тесе çырать. «Англипе Совет Союзĕ хушшинчи сыхăну противникăн вăйĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте икĕ çĕршывăн çĕр çинчи войскисем пĕр пĕрле усă курма май парать. Пирĕн çав куна хатĕрленмелле. Ливири кампани çак ĕçе вăйлăн хатĕрленнине кăтартса парать те ĕнтĕ. Çакă вăл Суэц çине хĕснине вăйсăрлатса, пирĕн союзниксене пулăшма войскăсене ирĕклентерме тата Вăтаçĕр тинĕсре пуçпулса тăрассине çирĕплетме май парать, кун хыççăн вара малашнехи вăрçă ĕçĕсене туса пырас ĕç чылаях çăмăлланать. Пирĕн войскăсене çак ĕçсене тума хатĕрлемелле».

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Германипе Англин мотомеханизированнăй войскисем хушшинчи çапăçусем Сиди-Резех патĕнче пулса пыраççĕ. Çав район патне илсе пынă çĕнĕ вăйсене çапăçăва кĕртнĕ. Кăнтăр-Африка войскисем нимĕçсен танксем пулăшса пыракан моторизованнăй пехотипе вăйлă атакине тÿссе ирттернĕ. Кăнтăр-Африка войскисем, вĕсен участокĕнче противник йыш тĕлĕнчен вăйлăрах пулсан та, питех те хăюллăн кĕрешнĕ, Англин мотомеханизированнăй войскисем пырса çитиччен тăшмана отпор парса тăнă. Англин мотомеханизированнăй войскисем нимĕç танкĕсене каялла чактарнă, противника питех те пысăк çухатусем кÿнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах, артиллеристсем тата танксем пулăшса тăнипе Çĕнĕ Зеланди чăсĕсем Грит-Капуццо хушшинчи тĕп чугунçул тăрăх Тобрук еннелле наступлени туса пынă. Çав чăссем çавтери вăйлă çапăçура пулнă. Малтан вĕсен кăштах чакма лекнĕ, анчах вăйлă çапăçу хыççăн, противникăн танкĕсене пĕтерсе тăкса, хăйсен позицийĕсене тепĕр хут йыпăннă. Икĕ енĕн те танксем нумай пĕтнĕ, халĕ çав çухатусене шута илме май çук-ха.

Англи войскисем, Тобрукран тухса, хăйсем çĕнĕрен тытса илнĕ позицисенче çирĕпленсе тăнă тата 2000 çынна тыткăна илнĕ, вăл шутран çурринне яхăн нимĕçсем.

Ливипе Египет чикĕин районĕнче противникăн салтакĕсене 1.000 çын ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн кăнтăр секторĕнче Джарабубран тапăнса пыракан Англин моторизованнăй чăсĕсем нумай малалла кайнă. Ишдин пиллĕкмĕш дивизийĕ Арджеба йышăннă.

Англин авиацийĕ Германи войскисем çине тата противникăн пухăнса тăнă моторизованнăй транспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă. Англин тинĕс-çар флотĕ тăшмана хирĕç питех те ăнăçлăн кĕрешнĕ, çĕр çинчи вăйсене пысăк пулăшу панă.

США де Голль войскисене пулăшма йышăнни

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтерĕшĕ тăрăх, де Голлĕн США-ри делегацийĕ, хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен каларнă закон тăрăх, Рузвельт де Голль генералăн войскисене пулăшасси çинчен распоряжени панă, тесе пĕлтернĕ. Хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен каларнă закона пурнăçа кĕртес тĕлĕппе ĕçлекен уполномоченнăй Стетиниус патне Рузвельт ноябрĕн 11-мĕшĕнче янă сыпăва пичетлесе каларнă. Сыпăра çапла калана: «Хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен каларнă закон тăрăх, Англи правительстви валли е унăн союзниксем валли уйăрнă материалсенчен Франçин ирĕклĕ войскисене парса сире пулăмăс шутпа, эпĕ çакна çирĕплетсе калатăп: французсен ирĕклĕ войскисем контроль туса тăракан Франçин кирек хăш территорине хÿтĕлени те США-на хÿтĕлес ĕç пулса тăрать».

Де Голль генералăн делегацийĕ тунă заявленире, Вейгана вырăнтан кăларни «Виши правительстви Гитлера пăтăнса тăнине çĕнĕрен кăтартса парать», тенĕ.

Хĕвелтухăç фронтĕнче Германин авиаци генералĕ Вильберг вилнĕ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, Германин авиаци генералĕ Гельмут Вильберг Хĕвелтухăç фронтĕнче вилнĕ. Вильберг Германи авиацийĕнчи чи ватă летчиксенчен пĕри шутланнă. 1937 çулти июль уйăхĕнче вăл Испанири «Кондор» легионĕн составне кĕрсе фашистсен çарне пулăшас тĕлĕппе ĕçленĕ. 1933 çулти март уйăхĕнче авиаци генералĕ чинне илсе отставкăна тухнă. Халăхы вăрçă пуçлансан вăл, каллех çара кĕрсе, учебнăй чăсри аслă офицерсен шутĕнче тăнă. Вильбергпа пĕрле тата тепĕр подполковник Кюрбс вилнĕ.

Паллă „асс“ Мельдерс вилни Германире хуйха ÿкернĕ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Хĕвелтухăçĕнчи фронтра паллă немĕç летчикĕ Мельдерс вилни Германире йывăр шухăша янă. Германи хаçачĕсем Мельдерс çинчен нумай вăхăт хушши вăл нимĕçсен «никам çĕнейми» тата никам амантайми» летчикĕсен сăнарне хăтартса тăракан çын, тесе мухтаса сыратчĕç. Халĕ ĕнтĕ, Мельдерса асăнса çыракан некрологсемпе сăмахсенче наçистсен пуçлăхĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнче Германи летчикĕсен чи лайăх кадрĕсем пĕтнĕ пирки хăйсем çухалса кайнине пытарса тăма пултараймаççĕ. Геринг, хăйĕн Мельдерс вилнĕ пирки сырнă некрологĕнче: çак «никам çĕнтерейми летчик» пĕтни мана хытă кÿронторчĕ, тенĕ.

ÇĔР ЧĔТРЕНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет. ноябрĕн 25-мĕшĕнче Гринвич вăхăчĕпе 17 сехет те 8 минутăра Англири сейсмически станцин инструменчĕсем питĕ вăйлă çĕр чĕтренине палăртнă. Хумхану çавтери пысăк пулнă пирки пиллĕкнавсем тума та май килмен. Сейсмолог Шоу пĕлтернĕ тăрăх, çĕр çакăн пек чĕтрени—вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче асăрханă çĕр чĕтренисенчен чи вăйли пулать. Шоу çĕр чĕтренин эпицентрĕ мĕнтери аякрине пĕлме пултарайман, мĕншĕн тесен унăн инструменчĕсем ĕçлеме чарăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Нью-Йоркран пĕлтерĕшĕ тăрăх, Сент Луисри университетăн сейсмографи приборĕсем Гринвич вăхăчĕпе 18 сехет те 18 минутăра çавтери вăйлă çĕр чĕтренине пĕлтерме пуçланă. Гринвич вăхăчĕпе 21 сехетре те çĕр хумханни палăрнă. Университет представителĕ çапла каласа панă: çĕр чĕтренин эпицентрĕ Атлантика океанĕнче, Азорски утравсемпе Мадейра утравĕ хушшинче пулать пулмалла. Нью-Йоркран панă тепĕр пĕлтерÿ тăрăх, хăшпĕр специалистсен шухăшĕпе, çĕр чĕтренин эпицентрĕ Исланди районĕнче пулма пултарать. Жертвайнори университетăн представителĕ пĕлтернĕ тăрăх, çĕр чĕтренин эпицентрĕ Вашингтонран 3000 миль хĕвелтухăç еннелле пулать. Буффалоран çапла пĕлтереççĕ: çĕр чĕтренин эпицентрĕ Буффалоран 4200 миль хĕвелтухăç еннелле пулать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ
СЛЕСАРИ-ВОДОПРОВОДЧИКИ, ТОКАРИ, РЕВОЛЬВЕРЩИКИ, ФРЕЗЕРОВЩИКИ (1-го РАЗРЯДА И ВЫШЕ), ИСТОПНИКИ.
Обращаться: Ленинградская ул. д. № 38.
5—1.

Ленинград çыннисен çирĕплĕхĕпе хастарлăхĕ

ЛЕНИНГРАД, ноябрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Виçĕ уйăх ĕнтĕ Ленинград хăй çине хĕссе пыракан тăшмана каялла сирсе тăрать. Хула стенисем патĕнче темиçе çĕршер пин таран нимĕç салтакĕ хăйĕн вилĕмне тупрĕ. Тăшманăн нумай тĕрлĕ çар техники тимĕр-тăмăр ланчăлĕсен купи пулса тăчĕ. Тăшман хупăрласа тăнин йывăрлăхĕ те, артиллерипе пени те, мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине, обществăллă çурт-йĕрсем çине бомбăсем пăрахса варварла ишĕлтерни те çакăслă хула ывăлĕсемпе хĕрĕсен вăйĕпе паттăр чунне çĕмĕреймерĕç. Ленинград завочĕсен, фабрикисемпе артелĕсен цехĕсенчен фронта пĕр вĕрĕмсĕр хĕçпăшал пырса тăрать. Завод — фронт,—вĕсем иккĕшĕ ĕнтĕ тÿррĕмĕнех, хăйсене пĕтĕçтерсе тăракан урăх звеносăрах, сыхăнса тăраççĕ. Хула патне пымалли вырăнсене сыхласа тăракан войскăсен представителĕсем хăйсене кирлĕ япаласем илме тÿрех заводсемпе фабрикăсен цехĕсене пыраççĕ. Вĕсем хăйсене мĕн кирлине парасса шансах пыраççĕ. Тупăсем, снарядсем, минăсем, винтовкăсем, пулеметсем, гранатăсем кирлĕ. — «Тăватпăр!»—теççĕ вĕсене ленинградецсем. Пĕрре панă сăмаха вĕсем пăсмаççĕ. Танксем, бронемашинăсем, бронепоездсем кирлĕ. Шутласа хунă кунсем иртеççĕ,—çак хушăра çĕнĕрен туса панă çар техники совет воинĕсен ăста аллисене кĕрет, вĕсем унпа фашистла аккупантсене çунтараççĕ. Вăхăтран-вăхăт заводсем хăйсен делегацийĕсене малти позицисене яраççĕ. Çав делегацисемпе хулан чи лайăх çыннисем, хĕçпăшал нумайрах туса паракансем, тава тивĕçлĕ çынсем каяççĕ. Вĕсем позицие пыраççĕ те чи малтанах: «Пирĕн хĕçпăшалпа кăмăллă-и?» тесе ыйтаççĕ. — «Хĕçпăшалăр тăшмана питех те лайăх çунтарать, спасибо! Анчах та ытларах туса парăр!»—тенĕ ответ илет делегаци. Çак ответа делегатсем завода илсе пыраççĕ. Пĕтĕм завод коллективĕ фронт тав тунипе хавасланать, татах та ытларах пикенсе ĕçлеме пуçлать.

Ленинград çыннисем тăвакан чаплă ĕçсене пурне те шутласа кăларма та йывăр. Ун пек ĕçсем хулленех пулса пыраççĕ. Н-ски заводра юлашки вăхăтсенче 100 çын ытла темиçешер станок умне тăрса тата урăх профессисене йышăнса ĕçлеме пуçларĕ. Тепĕр предприятире ремесленнăй училищере вĕренекенĕ пулнă Андреев, пĕр уйăх хушшинчех ватă рабочисенчен иртсе кайса, виçшер норма тултарса пыма тытăннă. Нумай станоксемпе ĕçлекен çамрăк коммунист Соколов, нумаях пулмасть, ĕç нормине 3500 процент тултарнă. Нормине тултарнă та, пĕр мухтанмасăр лăпкăн, чĕререн каласа хунă: «Манăн станок çĕнтерÿ хĕçпăлĕ вырăнне пултăр! Тăван Сталин чĕнĕвне ответлесе татах та лайăхрах ĕçлеме сăмах паратăп. Фронтра çапăçакан тăванăмсен маншăн тарăхса хĕлмелле пулмĕ»,—тенĕ.

Ленинград ывăл-хĕрĕсем йывăр чăтăмлă пурнăç вучахĕнче хĕрсе çирĕпленеççĕ. Çакăн çинчен ССР Союзĕн Верховный Совет депутачĕ академик Байков та радиопа тухса çапла каланă: «Эпĕ ватă металлург. Эпĕ, тĕнчере хурçăран çирĕп япала нимĕн те çук, тесе шутлама вĕреннĕ. Анчах хурçăран çирĕпрех материал та пур мĕн: çак чаплă материал вăл — совет çынни-сем», терĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Ленинград çыннисен туслăхлă семьи ÿсе çитĕнчĕ. Аслă хула патне пымалли вырăнсене хÿтĕлесе тăракансем, Мускав е Ростов çынни-и, грузин-и е казах-и вăл, вĕсем пурте пĕр кăмăлпа: эпир Ленинград çыннисем, теççĕ. Ленинград çыннисен пĕр çакăн пек вăйĕпе туслăхĕ çеç урăх пек хĕстерсе пыракан тăшмана тытса чарчĕç, ăна чарса оборонăра тăмалла турĕç. Халĕ ĕнтĕ вăрçăри пуçарулăх пирĕн алăра. Халĕ ĕнтĕ пирĕн боецсем наступление те тăшманăн блокадине татса пăрахса тесе каяççĕ. Вĕсем тăшмана блиндажсенчен, окопсенчен, ДЗОТ-сенчен хĕссе кăларса хăваласа çĕ. Боец-хулан, герой-хулан пурăçĕнчи кашни вак-тĕвек пайĕ паттăрлăхпа тата тÿсĕмлĕхпе тулса тăрать. Çурт тăррисенче, черлаксенче, алăксемпе хапхасем умĕнче вахтăра самозащита групписен боецĕсем—килхуçи арăмĕсем, рабочисем, служащисем тăраççĕ. Самозащита групписемпе аварийнăй отрядсен членĕсем, ăсти çурта снаряд е бомба ÿксе çĕмĕрет, часрах пулăшу пама çавăнта васкаса çитеççĕ. Дружинница-тĕрсем фронтăн малти линийĕсене каяççĕ, унта вĕсем тăшманăн вут-çулăмĕ айне кĕрсе аманнă боецсене пулăшу параççĕ. Кашни госпиталĕн хăйне пăхса тăма обществăллă ĕçе юратакан активисткăсенчен организациленĕ пысăк резервсем пур, çав активисткăсем аманнă боецсем патĕнче дежурствăра тăма е ытти кирек мĕнле ĕçсене тума та ялан хатĕр тăраççĕ. Фронта пĕр вĕçĕмсĕр машинăсем каяççĕ, вĕсем Ленинград боецĕсемпе командирĕсене валли тиенĕ ăшă тумтирсем турттараççĕ. Ленинградăн чи лайăх çыннисем большевиксен партийĕ ретне тата ленинла—сталинла комсомол ретне кĕреççĕ: çак кунсенче партие кĕрсе, коммунист ятне илсе хăйсем çине пĕтĕм халăх умĕнче питех те пысăк ответлăх илнине лайăх пĕлеççĕ; партие вĕсем, Сталин юлташ вĕрентсе пынă пек, татах та ытларах, пикенерех ĕçлес тесе кĕреççĕ.

Хула хĕçпăшал туса кăларать, хула хăйĕн оборонине çирĕплетет. Хула тăшмана хирĕç çапăçать. Çак хушăрах унта пысăк культурăллă пурнăç та пĕр кунлăха та чарăнса тăмасть. Наукăн çĕршер çыннисем институтсенче ĕçлеççĕ, пиншер студентсем аудиторисенче вĕренеççĕ.

Хула патĕнчи çапăçусенче те, производствăра та, оборона укрепленийĕсене тунă çĕрте те, самозащита групписен вахтисенче те, çавăн пекех тата хулан çăлкуçĕ пек вĕресе тăракан культурăллă пурнăçĕнче те пĕр вăй-хăват курăнать—çирĕп тăрас, тÿсес, тăшмана çапса çĕмĕрес ĕçе организацилес, тенĕ туйăм палăрать. Ленинград çыннисен чĕрисенче хăйсем çĕнтерессине ĕненни ялкăшса çунать, çак ĕненÿ вĕсене йывăр ĕçре хавхалантарать. Çав çынсен чаплă ĕçĕсем историе кĕрсе юлĕç.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5145

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557, Ф. 6. 58—84 п. л.